Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

38 (7569) № * Юн кун, 2008 çулхи майăн (çу) 21-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Çур аки**

## Район уй-хирĕсенче



***Районти хуçалăхсем çурхи культурăсене акса хăварнă хыççăн çĕр улми лартас ĕçсене те вĕçлесе пыраççĕ.***

***Ĕнерхи кун тĕлне районта 947 гектар çĕр улми лартса хăварнă. Пĕтĕмпе 1313 гектар лартса хăварма палăртнă. Лайăх ĕçлекенсен йышĕнче Йӳçкассисемпе Çатракассисем. «Ударник» хуçалăхра 230 гектар, «Свобода» хуçалăхра 160 гектар лартнă.***

***Пĕтĕмпе 39 гектар пахча çимĕç акса-лартса хăварнă. Пĕтĕмпе 57 гектар лартма пăхнă.***

**Паян – информаци кунĕ**

## *Бюджет, экологи, кубок...*

Паян районта, мĕн пур республикăри пекех, информаци кунĕ иртет. Унăн теми – республикăри бюджет политики, çут çанталăка, тавралăха тирпей-илем кĕртесси, усă курма çĕрсене çаврăнăша тавăрасси, 23 Тĕнче кубокĕн итогĕсем.

Информаци ушкăнĕсем Чуманкасси, Мăн Сĕнтĕр, Йӳçкасси ял тăрăхĕсенче пулса кунти ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ.

**Район администрацийĕнче**

## *Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн*

**РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙĔН ПУÇЛĂХĔН 2008 ÇУЛХИ МАЙĂН 14-МĔШĔНЧИ ЙЫШĂНĂВĔПЕ РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙĔН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ**

***Çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:***

**Татьяна Сергеевна ГОРШКОВАНА**, Оринин шкулĕнчи пуçламăш классен учительне;

**Калерия Порфирьевна СОРОКИНАНА**, Москакасси шкулĕнчи директорăн çумне;

**Юлия Александровна ЯЛУШКИНАНА**, Муркаш шкулĕнчи математика учительне.

***Халăха тивĕçтерес ĕçре нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла активлă ĕçшĕн:***

**Лилия Валерьевна НИКОЛАЕВАНА**, «Визит» суту-илӳ çурчĕн директорне.

**Александр Семенович ПОРТНОВА**, уйрăм предпринимателе.

***Район экономикине пысăк тӳпе хывнăшăн тата обществăлла активлă ĕçшĕн:***

**Вячеслав Петрович ЧИСПОПОЛЕВА**, Шупашкарти троллейбус управленийĕн пуçлăхне.

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:***

**Любовь Зиновьевна СТЕПАНОВАНА**, «Свобода» хуçалăх ĕçченне,

**Михаил Герасимович ЛЕБЕДЕВА**, Муркашри чăх-чĕп фабрикин водительне.

***Çамрăк ăрăва пăхса ӳстерес ĕçре нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла активлă ĕçшĕн:***

**Юрий Николаевич ЕРШОВА**, Çамрăк техниксен станцийĕн педагогне.

**Республика кунне хатĕрленнĕ май**

# Муркаш уява хатĕрленет



Республика кунĕ пирĕн патăмăра çак çулпа тепĕр уйăхран кĕрлеттерсе çитĕ. Ăна кĕтсе илме пирĕн пурин те тимлесех хатĕр пулмалла.



Çĕнĕ тротуарпа, çĕнĕ карта çумĕпе утма питех те кăмăллă.

Республика кунĕ Муркаш районне килсе кĕриччен вăхăт сахалрах та сахалрах. Пурнăçламалли вара кунĕ çитсе пынă май ытларах та ытларах тухса пырать пек. Муркашсем йывăрлăхсене çĕнме вĕреннĕ тенине шута хурса тухрăм та эпĕ урама иртнĕ тунти кун, çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче. Пытармастăп, Муркаш урамĕсенче хĕрӳ ĕç шавĕ тăрать. Унта экскаватор ĕçлет, юнашар лаптăкрах бульдозер вăй хурать, хăватлă КамАЗсем тăпрапа та хăйăрпа унталла-кунталла ĕçпе чупаççĕ. Теприсем авă Ленин урамне вак чул турттараççĕ, асфальт çул валли никĕс хываççĕ. Çул çинче ĕçлекен «Волгодорстрой» акционерлă общество техникине кунти ĕçченсем алă ĕçĕпе пулăшсах тăраççĕ.



«Волгодорстрой» акционерлă общество ĕçченĕсем Муркаша çĕнĕ хăт кĕртессипе вăй хурсах ĕçлеççĕ.

– Муркаш районĕпе тачă çыхăну тытса пурăннăран Республика кунне кунта irttерме палăртнине те эпир хамăр тĕлĕшпе тунă йышăнăну выраннех хуратпăр. Çак шухăш-ĕмĕтпе иртен пуçласа каçченех Муркаш урамĕсенче тимлетпĕр, – терĕç Муркаш автовокзалĕ хыçĕнчи асфальт саракан строительсем.

Малалла каятăп. Гагарин урамне тухсан кунти çĕнĕ асфальт тӳрех куçа курăнать. Унпа малалла иртетĕн те районти шалти ĕçсен пайĕ тăрăшсах Республика кунне хатĕрленсе ĕçленине куратăн. Вĕсемпе юнашар вырнаçнă налук инспекцийĕн тата мировой судьясен çуртне çĕнĕ хăт кĕртме пуçлани те куç умне тӳрех тухать.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

## Республика кунне районта уявличчен 34 кун юлчĕ

**Республикăра**

## Кĕр тыррисем ытларах акнă

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров правительство членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу иртгернĕ.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев уй-хирти çурхи ĕçсем мĕнле пыни çинчен пĕлтернĕ. Кĕр тыррисене шута илсен акнă культурăсен лаптăкĕ иртнĕ çулхипе танлаштарсан кăçал 7,4 процент ӳснĕ. Акмалли плана Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри районĕсемсĕр пуçне Чăваш Республикинчи ял хуçалăх районĕсенче пуринче те (хăшпĕр çĕрте ирттерсе те) тултарнă. Малтанхи икĕ районта кризисран тухма тапаланаççĕ пулсан, Сĕнтĕрвăрри районĕ – пысăк йывăрлăхра.

Республикăра çĕр улми лартса пĕтернĕпе пĕрех, лайăх ĕçлекен хуçалăхсенче кăтартусене палăрмаллах ӳстерме палăртнă. Ӳсен-тăрана хими мелĕпе хӳтĕлес енĕпе ĕçлеççĕ. Николай Федоров Сĕнтĕрвăрри районĕнчи уй-хирти ларутăру пирки пăшăрханнине пĕлтернĕ, васкавлă мерăсем йышăнмаллине палăртнă.

## «Атăл чиккинче» фестиваль уçăлать

Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ Роза Лизакова Пĕтĕм тĕнчери патриотла фильмсен пĕрремĕш «Атăл чиккинче» фестивальне мĕнлерех хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ. Ку мероприяти Шупашкарта 2008 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-5-мĕшĕсенче иртет. Мĕн пур ĕçе графикпа пĕр чăрмавсăр ирттереççĕ. Конкурспа килĕшӳллĕн тата конкурса кĕмен фильмсене кăтартмалли лапамсене палăртнă, режиссерсен, вĕсемпе ĕçлекенсен ушкăнĕ фестивале уçмалли тата хупмалли уявсене хатĕрлет, тĕрлĕ йышши пичет продукцийĕ кăлараççĕ.

## «Аслă Атăл» курав малалла ĕçлет

Регионти Х «Аслă Атăл» ӳнер куравĕ малалла ĕçлет, Чăваш Енре пурăнакансем тата хăнасем унпа хытă кăсăкланаççĕ. Уйрăммăн илсен, Раççей тата Украина художникĕсен экспозицие тăратнă ĕçĕсемпе хăвăрт утакансен XXIII Тĕнче кубокне хутшăннисем тата хăнасем паллашнă. «Ку тĕлĕнмелле курав, унта ку чухнехи искусствăн мĕн пур жанрне çутатса панă», – палăртнă Президент.

## Экономика форумне хатĕрленеççĕ

Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ Иван Моторин Шупашкарта иртекен «Управлени. Экономика. Аталану» экономика форумне мĕнлерех хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ. Çакнашкал анлă, пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятипе чикĕ леш енчи патшалăхсен тăхăр посолĕ, Австри, Венгри, Швеци, Польша, чикĕ леш енчи ытти çĕршывăн экономика миссийĕсен, Раççейри регионсен представителĕсем кăсăкланма пуçланă та ĕнтĕ. Шупашкарти форума Чăваш Енри предприятисем хутшăнаççĕ.

Ĕçлĕ канашлура çавăн пекех Шупашкарта Раççейри Пĕрремĕш «Раççей инновацийĕсене – Раççей капиталĕ» форума ирттерессипе çыхăннă мероприятисене сӳтсе явнă, ытти çивĕч ыйтăва пăхса тухнă.

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, аттене, çывăх çыннăмăра – Турай ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Николай Порфирьевич СЕРГЕЕВА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал, телей, ăнăçу, канлĕ ватлăх сунатпăр. Утас çулу такăр пултăр, чир-чĕр таврашĕ сан çума нихăçан та ан çыпăçтăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, çывăх тăванĕсем.**

**Çырăнтару – 2008**

## «Çĕнтерӳ ялавне» малалла çырăнтараççĕ

**Район хаçатне 2008 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Ултă уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак - 181 тенкĕ те 80 пус. Малтанхипе танлаштарсан, райхаçата ултă уйăха çырăнса илмелли хак 12 тенкĕ те 18 пус çеç ӳсрĕ.**